# Халăх юрăçи

## В.И.Давыдов-Анатри – 80 çулта

**Георгий ЕФИМОВ**
Чăваш халăх поэчĕ

**1946 çул. Аслă Отечественнăй вăрçă чарăннăранпа çулталăк çитнĕ ĕнтĕ. Çынсен пичĕ-кусĕ çинче лăпкă-лăхпа кулă уççăнах курăнать. Çăкăрпа ытти апат-çимĕçе карточкăпа туянатпăр пулин те, пурнăç лайăхланса каяс шанчăк пысăк. Вăрçă хăратса тăма пăрахнă ĕнтĕ пире. Пурсăмăр та Аслă Çĕнтерÿ хăвачĕпе пурăнатпăр.**

Шăпах çак çул Шупашкар урамĕнче Илле Тукташа тĕл пултăм.

–Ăсталла çул тытатăн, Якур шăллăм? – йăл кулarах ыйтать Илья Семенович.

– Уроксем хыççăн уçăлса çÿрес терĕм-ха, – хуравлатăп эпĕ ăна.

– Пĕлетĕн-и, Якур? – тет вăл мана. Унтан хăех хурав парать. – Васлей Давыдова "Чеменпе Мерчен" поэмăшăн виççĕмĕш премии патăмăр. Хамăр республика 25 çул тултарнă ятпа ирттернĕ конкурсра çĕнтерчĕ. Мана пĕччен аван мар, атя, иксĕмĕр Васлей патне, килне, каятпăр.

Василий Иванович ЦИК çуртĕнче пурăнатчĕ вăл вăхăтра. /Унта ĕлĕкрех патшалăх ĕçĕнче ĕçлесе тăракансем пурăннă. Хулари паллă çуртчĕ вăл./

Çапла паллашнă эпĕ пулас халăх поэчĕпе Василий Иванович Давыдов-Анатрипе. Вăрăм кун-çулта хушăмăрсенчен хура кушак та чупса каçнă пулĕ, çавах та ырри, савăнăçли нумайрах пулнă пек туйăнать.

"Чеменпе Мерчен" поэмăна Мускавра пичетлесе кăларнă чух Социализмла Ĕç Геройĕ Сергей Наровчатов сăвăç çапла хак панăччĕ: "Поэма разделена на небольшие главки и подзаголовки, почти каждая из них представляет художественное целое... Поэма по-настоящему народна, истоки ее в чувашском фольклоре, все время прощупываются в ней песенные интонации, слышатся поговорки и пословицы". Кунтан лайăхрах калаймăн та. Çавăнпа эпĕ С.Наровчатов çырнине чăвашлатмарăм.



Çапла, В.Давыдов-Анатрин литературăри кун-çулĕ калăплă произведенирен пуçланнă. Паллах, унчен вăл сăвăсем çырса ăсталăхне туптанă. 1936 çулта унăн малтанхи сăвви, "Çуллахи илем" ятлăскер, Патăрьел районĕнче тухса тăракан "Коммунар" ятлă хаçатра пичетленсе тухнă. Малтанхи сăвăпа поэма хушшинче шăпах 10 çул! Ку вăхăтра шухăшлама, ăсталăха туптама та вăхăт пур ĕнтĕ. Сăвăçăн тăрăшăвĕпе ĕçченлĕхĕ сая кайман авă. Пултарулăх пур çын яланах тăрăшать.

Тата çакна та каласа хăвармалла: унăн С.Элкер, П.Хусанкай, Я.Ухсай, И.Ивник, А.Алга, Н.Янкас тата ыттисен умĕнче яваплăхĕ пысăк пулнă, вĕсен умĕнче ята яма юраман. Çав паллă сăвăçсем чăваш литературин сăпки умĕнче тăнă, тăнă çеç те мар, вĕсем таса сăпкана кулленех сиктернĕ, чăваш литературин сăваплă ăрăвне çитĕнтернĕ: тăван халăха юратма, чăваш чĕлхине, атте-аннен чĕлхине хисеплеме вĕрентнĕ.

В.Давыдов-Анатри. Ял ачи, паллах, пĕчĕкренех çĕр ĕçĕпе çыхăннă. Вăл сухалама, Çеçпĕл калашле, утă çулма, вутă çурма пултарнă. Ача пĕлÿшĕн çуннă, яланах ăс-хакăлне туптама май шыранă, тăрăшнă.

80 çул! Калама кăнаç. Василий Ивановичпа тĕл пулнă çула аса илсен те 51 çул иртсе кайнă. Мĕн чухлĕ шыв юхнă, кун иртнĕ, тăвăл тухнă, лăпкăлăх пулнă унтанпа? Пирĕн çыракан çынсем хушшинче ун чухлĕ пурăнакансем питĕ сайра. Юрать-ха халĕ пирĕн ретре сакăр вуннă урлă каçнă Хĕветĕр Уярпа Валентина Эльпи пур. Пурте ăслă-пуçлă, çыраççĕ, ĕçлеççĕ. Халĕ, акă, вĕсен йышне чăваш халăх поэчĕ Василий Иванович Давыдов-Анатри кĕчĕ. Вăл та яш-кĕрĕмпе танах вăй хурать, тăрăшать. Апла унăн сывлăхĕ çирĕп пултăр, ăс-хакăлĕ ан чактăр.

---

**Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИ**

### Хăна юрри

**Хитре çапла килсе курни,**
**Пĕрне-пĕри хисеп туни.**
**Мĕнле аван чун-чĕрене**
**Тăвансемпе пĕрле чухне.**

**Ăнса пулсан тырри-пулли**
**Кĕрекĕрсем ялан тулли.**
**Мĕнле аван чун-чĕрене**
**Тăвансемпе пĕрле чухне.**

**Тухас килмест çак**
**кил-çуртран**
**Килĕштерсе пурăннăран.**
**Мĕнле аван чун-чĕрене**
**Тăвансемпе пĕрле чухне.**

**Çĕре-шыва сума сăвар,**
**Яла-йыша савса юрлар.**
**Мĕнле аван чун-чĕрене**
**Тăвансемпе пĕрле чухне.**

### Ачалăх

**Ача чухнех ÿксе юлман,**
**Кун таппинчен кайра**
**пулман.**
**Чупса тухаттăм урама,**
**Мĕнле маттурччĕ выляма.**
**Аннепеле, ял-йышсемпе,**
**Асран кайми тăвансемпе**
**Ирех тухаттăм тыр вырма,**
**Вутта каяттăм вăрмана.**

**Çурхи хĕвеллĕ ĕшнене**
**Çуллен çÿреттĕм сертене.**
**Вулаттăм эпĕ юратса**
**Каçпа, çĕр варринче тăрса,**
**Якку Ухсай сăввисене,**
**Слакпуçĕнче сăввисене.**
**Силпи тухатчĕ куç умне,**
**Çитеттĕм Пушкăрт**
**çĕршывне.**
**Сетнерпеле Нарспи ятне**
**Çыраттăм шурă хут çине...**
**Сисмен те çÿç шуралнине.**
**Чипер ачалăх, ăçта эс? –**
**Епле санпа тепре пуплес.**
**Пăхса илсемччĕ ман енне,**
**Вут-хĕм парсамччĕ чĕрене!**

### Сиплĕх пулчĕ

**Эп манас çук ĕмĕрне:**
**Кăнтăр исĕм çырлине,**
**Витĕр çутă сăнлине.**
**Çирĕм, пычĕ чĕрене,**
**Сиплĕх пулчĕ.**

**Эп манас çук ĕмĕрне:**
**Мелитополь арпусне.**
**Шурăмпуç пек хĕрлине.**
**Çирĕм, пычĕ чĕрене,**
**Сиплĕх пулчĕ.**

**Эп манас çук ĕмĕрне:**
**Çÿллĕ, чул-ту мăйăрне,**
**Тутлă тутă кĕнине.**
**Çирĕм, пычĕ чĕрене,**
**Сиплĕх пулчĕ.**

**Эп манас çук ĕмĕрне;**
**Хĕвел пахчи ырлăхне –**
**Мукусăни эрехне.**
**Ĕçрĕм, пычĕ чĕрене,**
**Сиплĕх пулчĕ.**

### Куççăр пулнă

**Атăл шывĕ юхса выртнине**
**Курнă эпĕ –**
**Куçлă пулнă.**
**Атăл шывĕ типсе пынине**
**Курман эпĕ –**
**Куççăр пулнă.**

**Ман çумра тусăмсем**
**пуррине**
**Курнă эпĕ –**
**Куçлă пулнă.**
**Йывăр чух тусăмсем**
**тарнине**
**Курман эпĕ –**
**Куççăр пулнă.**

### Шурă лантăш

**Саншăн пухрăм шурă**
**лантăш**
**Эп хĕвеллĕ ĕшнере.**
**Мĕншĕн-мĕншĕн эс,**
**хĕр-тантăш,**
**Ялан манăн чĕрере.**

**Мĕншĕн-мĕншĕн, савнă**
**тусăм,**
**Çунтаратăн чунăма?**
**Эс тухсамччĕ, хура куçăм,**
**Каç пулсассăн – шыв ăсма.**

**Ун чух шурă лантăш парăп**
**Сана кÿлĕ хĕрринче,**
**Юрă тупăп, шăрантарăп**
**Кĕмĕл уйăх çутинче.**